Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 132 N (4701) | *1998 çулхи ноябрь (чÿк) уйăхĕн 20-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## ТР Президентне М.Шаймиева МГИМО хисеплĕ профессорĕн дипломне панă

Ирнĕ эрнере Мускаври халăхсем хушшинчи хутшăнусен патшалăх институтĕнче (университетĕнче) Тутарстан Республикин Президентне Минтимер Шаймиева МГИМО хисеплĕ профессорĕн дипломне панă. Çак наградăна вăл Раççей политикĕсенчен пĕрремĕшĕ тивĕç пулнă.

Халăхсем хушшинчи çыхăнусене аталантарассине пысăк тÿпе кĕртнĕшĕн патшалăх паллă деятелĕсем тата ученăйсем тивĕçнĕ наградăна ТР Президенчĕ Тутарстана тата унăн халăхне сума сунă пек йышăннă.

ТР Президенчĕ МГИМО преподавателĕсемпе студентсен, Раççейри массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсен ыйтăвĕсем çине хуравланă.

**(Татар-информ)**

# Вырăнти самоуправлени. Вăл мĕнле пулмалла?







Ноябрĕн 17-мĕшĕнче Нурлатра вырăнти самоуправлени ыйтăвĕсем тĕлĕшпе районти канашлу пулчĕ. Искусствăсен шкулĕн концерт залĕнче вырăнти самоуправленин Сочĕсен ертÿçисем, Нурлат районĕн активĕ, администраци аппарачĕн тата халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн ĕçченĕсем, ученăйсем пуçтарăнчĕç.

Тĕлпулăва халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕн председателĕ, администраци пуçлăхĕ **Ф.С.Сибагатуллин** уçрĕ тата иртерчĕ. Вăл сăмах çак ыйтусем çине хурав тупасси çинчен пынине палăртрĕ: вырăнсенче ĕç тытăмне мĕнле майпа çирĕплетес тата çав органсене хуçалăха тытса пырассине тĕреклетме мĕнле пулăшас, предприятисемпе огранизацисем тата учреждениесем вырăнти самоуправлени органĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлессине çирĕплетессине Раççейри мĕнле регионсен опытне (вăл тĕрлĕ - Норильскран тытăнса Суздале çити!) тĕпе хума пулать? Халăха пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем пăшăрхантараççĕ. Кил-çурта çутçанталăк газĕ, шыв кĕртнĕ-и, çутă пур-и, райцентра автобус çÿрессине йĕркеленĕ-и, ял çулĕсене майланă-и, вăрах вăхăт хăпартакан клуба хута ярĕç-ши? Çаксемшĕн вырăнти пуçлăхсем яваплă, анчах укçа ăçтан илмелле? Вырăнти самоуправление малашне аталантармалли программăсене ĕçлесе хатĕрлеме опытлă ученăйсене явăçтарма йышăннă, çакă кирлĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ шухăшсене практикăна усăллăрах кĕртме май парĕ.

**В.И.Патрушев** академик (Мускав хули) рынок ĕçне вăйлатас, "сÿтес", тĕрлĕ ведомствăсен тата тĕрлĕ енлĕ пăхăнса тăракан объектсене ĕçлеттерес, социаллă программăсене пурнăçлас тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн вунвун регионĕн опытне тĕплĕн тата конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартса çутатса пачĕ. Докладăн экономика аспекчĕ, калаçу евĕр ирттĕнĕскер, пуçтарăннисене уйрăмах интереслентерчĕ. Вырăнти финанс ыйтăвĕсене законпа килĕшÿллĕн йĕркелесе яриччен, çавна май, тĕсре, канашлу хыççăн эпир шухăшсемпе улшăннă вăхăтра Советсен председателĕсем палăртрĕç те ĕнтĕ). В.И.Патрушев çаплах финанспа кредит системин, муниципалитет банкĕсен сечĕ мĕнлĕхрен, вырăнти самоуправленисен Совечĕсем пуçтарнă укçана "çÿлерех" куçараççĕ, пĕр пайне вырăнти шайра хăварсан тĕрĕс пулмалла. Çакăн пек лару-тăру Советсен финанс ĕçне йĕркелесе тăрĕччĕ, социллă сферăна тивĕçлĕ шайра тытма тата нумай вăхăта палăртнă социаллă программăна пурнăçлама май парĕччĕ. Апла пулсан, шăп вырăнти финанссене çирĕплетни халăхăн пурнăç условийĕсене тивĕçтерессин чи пуçламăш никĕсĕ пулса тăрать (çак шухăша, практикăпа çирĕплетнĕскеле ĕçленин, кадр ĕçĕсен, вырăнти самоуправленисен Уставĕн пахалăхĕ енĕн ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăчĕ.



Муниципалитет университечĕн проректорĕ, **И.В.Мартынычев** профессор (Альметьевск хули) хăйĕн сăмахне самоуправлени философийĕн ыйтăвĕсене халалларĕ. Çак лару-тăрăва лайăх пĕлекен çынсем те ăна ĕлĕкхипе танлаштармасăр пултараймаççĕ.

Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн Советсемпе ĕçлекен пай заведующийĕ **Л.В.Львова** вырăнти самоуправлени органĕсен представителĕсен территорисенче октябрь-ноябрь уйăхĕсенче иртнĕ пухăвĕсен итогĕсем çинчен каласа пачĕ. Вĕсенчен пĕрин ĕçне, Чистайра иртнĕскере, нурлатсем те хутшăннă, пирĕн хаçатра ун çинчен вулакансене (1998 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче тухнă "Туслăх" хаçатра "Вăхăт улшăнать, йывăрлăхсем вара юлаççĕ" ятпа) çырса пĕлтернĕччĕ.

Территорири пухусенче йышăннă рекомендацисенче, вĕсемшĕн пирĕн район представителĕсем те сасăланă, вырăнти самоуправлени органĕсене уйрăм патшалăх полномочийĕсем памалли çинчен закон йышăнмалли, вĕсен ĕçченĕсен статусĕ, кĕçĕн органсене çĕр налукĕ илессине çирĕплетесси тата ытти çинчен те каларĕ. Сăмах май, Л.В.Львова вырăнти самоуправление малашне аталантарассипе çыхăннă ыйтусене кĕртнĕ законсен пакетне хатĕрлес ĕç пыни çинчен пĕлтерчĕ.

Канашлура актив хутшăннипе ыйтусем сÿтсе явни пулмарĕ. Çапах икĕ енĕ хушшинче калаçу иртрĕ ĕнтĕ. Шухăшсем пĕр пек пулни палăрчĕ: реформăсене каялла çавăрма çук, киввисем манăçăнаççĕ, çĕнĕ практика йывăррăн пурнăçланать, законсем вара пурнăçпа килĕшсе пыма ĕлкĕреймеççĕ. Советсен тивĕçĕсем вара сыхланса юлаççĕ - ялта вĕсемсĕр пурăнма çук. Апла пулсан, вырăнти самоуправление пулăшмалла. Патшалăх шайĕнче.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕсенче: тухса калаçаççĕ Ф.С.Сибагатуллин, И.В.Мартынычев (çÿлте), В.И.Патрушев; пухăва хутшăннисем.**

# Фотоконкурс

Акă темиçе çул ĕнтĕ ачасемпе çамрăксен центрĕнче "Фотон" фотокружок ĕçлет, унта хулари шкулсенчи тĕрлĕ çулсенчи ачасем çÿреççĕ. Пирĕн кружока çÿрекенсен фотоĕçĕсем республика шайĕнчи выставкăсенче час-часах малти вырăнсем йышăнни çинчен мухтанса калама та пулать.

Халь те палăрма май пур, кунта фото ăсталăхĕпе интересленекенсем пурте хутшăнма пултараççĕ: ноябрĕн 23-мĕшĕнчен тытăнса 30-мĕшĕччен ДЮЦра ачасен туризмĕ 80 çул тултарнине халалланă фотоконкурс иртет. Конкурса хутшăнакансен творчество ĕçĕсенче турист пурнăçĕпе, походсемпе тата ăмăртусемпе çыхăннă тĕрлĕ лару-тăрăва, пирĕн районти ачасен туризмĕн ветеранĕсен фотопортречĕсене кăтартма май пур.

Сăнÿкерчĕксем тĕрлĕ тĕслисем, хура-шуррисем, тĕрлĕ калăпăшлисем пулма пултараççĕ. Сирĕн сăнÿкерчĕкĕрсене кĕтетпĕр, çĕнтерÿçĕсен ĕçĕсене вара уйрăммăн палăртĕç, район хаçатĕнче пичетлесе кăларĕç.

**С.ФАДЕЕВА.**
**ДЮЦ.**

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тÿлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# Ĕçпе хавхалану юнашар

*Маларах ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисем ÿкерме кăмăлланине курса куляннă, мĕншĕн тесен пирĕн патра ачасен хăйсен ÿкерÿ ăсталăхне аталантарма пултарма ятарлă шкул пулман. Халĕ вара Нурлатра ачасен искусствăсен шкулĕ кăна мар, пултаруллă ачасене валли сăнарлă студи те пур. Çакă вара Нурлатри ачасемшĕн чăнах та пысăк телей.*



Пĕрре ăнсан, тепре те ăнмалла теççĕ. Шкулшăн, вĕренекенсемшĕн те кунта опытлă, пултаруллă тата ятарлă пĕлÿ туяннă специалист Н.М.Павлова ĕçлени ăнăçлăх мар-им? Вăл маларах ачасен "Родничок" прогимназийĕнче воспитатель, сăнарлă студи ертÿçи пулса ĕçленĕ. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене садика илсе пырсан хитре тата пĕлсе илемлетнĕ холсене пăхса савăнаççĕ, вĕсене стенасем çинчи юмахсенчи чипер геройсем саламлаççĕ. Анчах ун чухне çак илеме Нина Михайловна Павлова воспитатель тунине сахаллăн пĕлнĕ пулĕ. Кăçал вара ăна искусствăсен шкулне ĕçлеме чĕнсен, ача сачĕн коллективĕ ăста специалистпа уйрăлас темен, ачасем те çакăн çинчен пĕлсен салхуланнă, Нина хăй те çакна çăмăллăн йышăнман. Ĕçтешĕсем лайăх специалиста тата пултаруллă художника урăх çĕре ярасшăн пулман. Кунти ачасем хăйсен наставникĕпе темиçе çул иртсен татах тĕл пулни лăплантарать. "Родничокра" вара Нинăн ĕçĕсем юлнă - юмахсенчи тĕлĕнмелле илемлĕ сăнарсем.

Çапла, кăçалхи çуркунне Нина Михайловна пултаруллă, шанăç паракан художник пек палăрчĕ. Районти вĕрентÿ пайĕ йĕркеленĕ вырăнти профессионал художниксемпе ÿкерме юратакансен пултарулăх выставкинче вăл хăйĕн вунă ытла картинине тăратнă (сăнÿкерчĕкре). Выставкăна пыракансене унăн пейзажĕсемпе натюрморчĕсем тыткăнланă. Хисеплĕ жюри, унăн составне Лениногорскри искусствоведсем кĕнĕ, Нина Михайловнан творчествине пысăк хак панă: ăна III степень Дипломĕпе тата хаклă парнепе чысланă. Вăл малти вырăнсене йышăннă художниксенчен пĕртен-пĕр хĕрарăм пулнă. Хальхи вăхăтра çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсен хушшинче те пултаруллисем сахал мар вĕт (çак факт та çакна çирĕплетет: хальхи вăхăтра сăнарлă студие çÿрекен 36 ачаран пиллĕкĕшĕ çеç арçын ача). Çапах килти кашни кунхи ĕçсем, йывăрлăхсем пултарулăха аталантарма чараççĕ, çавăнпа та хăйсен талантне пурнăça кĕртекенсем питĕ сахал.

Нина Михайловнан выставкăра кăтартнă темиçе картини халь искусствăсен шкулĕн сăнарлă студине илемлетеççĕ. Унта çутă та ирĕк, ретпех мольбертсем тăраççĕ. Стена çумĕнчи пысăк шкапа кĕнекесене тирпейлĕ вырнаçтарнă. Ачасем шкула кăмăлпа çÿреççĕ. Эрнере виçĕ хутчен икĕ сехет çуршар вĕренеççĕ пулин те, занятисем ывăнтармаççĕ, кашни çĕнĕ урок ачасемшĕн çĕнĕлĕх вĕт. Çавăнпа вĕсем уроксене сиктермеççĕ. Ÿкерме вĕренме вара кунта Нурлатăн мĕнпур енчен çÿреççĕ: халăхра "гондурас" текен çĕнĕ микрорайонтан та, сахăр вĕретекенсен поселокĕнчен те. Кунта вĕренсе вĕсем искусствăн илемлĕ те вăрттăнлăхлă тĕнчипе хутшăннине туяççĕ, ăшĕсенче çакăнпа мăнкăмăлланаççĕ. Кунта искусствăсен шкулĕн художествăпа графика уйрăмĕсем валли хатĕрлесе çирĕплетнĕ программăпа вĕрентеççĕ.

Нина Михайловна хăй вĕрентекен ачасем тăвату çултан специальноçа алла илесси çинчен ĕмĕтленет. Çак хĕрачасемпе арçын ачасем çине пăхса вăл, паллах, хăйĕн ачалăхне, тăван ене аса илет.

Унăн питĕ туслă çемье, кунта унăн ĕçне, туртăмне ăнланаççĕ, хисеплеççĕ, ăна хăть хăçан та пулăшма хатĕр (мăшăрĕ Олег Васильевич тата хуняшшĕ Василий Иванович художниксем, хунямăшĕ вара кирлĕ чухне канашсем паракан наставник), анчах та унăн чунĕ тăван вырăнсенех туртăнать... Вăл Чăваш Енри Çĕрпÿ районĕнчи Яноросово ялĕнче çуралнă. Çемьере 9 ача ÿснĕ. Нина вăтам шкул пĕтерсен И.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх пединститучĕн художествăпа графика факультетне вĕренме кĕнĕ (çавăнта Олегпа паллашнă). Вăл Раççейĕн паллă художникĕсенчен Н.В.Овчинниковран, Р.Ф.Федоровран, В.Петровран вĕреннĕ. Шăпа вара ăна Нурлата илсе çитернĕ. Халь унăн хĕрĕ Лиза та виççе кайнă ĕнтĕ, аслисем çук чухне вăл тин тытăннă картина çине хăйĕн "йĕрĕсене" палăртма ĕлкĕрет. Çак вăхăт хушшинче уншăн Нурлат та çывăхланнă. Çапах та алла кисть тытсан пир çинче тăван енри чечеклĕ çеçенхирсен, çунса тăракан хĕрлĕ пилешлĕ ылтăн кĕркунне, пĕрремĕш юр витнĕ уй-хир чĕрĕлеççĕ.

Унăн шухăшĕсем, тăван ене тунсăхлани пултарулăхне витĕм кÿни ахальтен мар, çавăнпа та çак картинăсем çине хумханмасăр пăхма çук.

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**

**Н.АЗИЗОВ сăнÿкерчĕкĕ.**

Астăвăм

# Этем каять, юрă вара юлать...



Эпĕ хама телейлисен шутне кĕртетĕп. Ку саманти телей мар - манăн кăмăл пурнăçри чи хаклă тĕллеве пурнăçланипе тулчĕ. Шăпа панă çак парнешĕн эпĕ хама телейлĕ туятăп.

... Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче партин районти комитечĕ тата халăх депутачĕсен район Совечĕ мана районти культура пайне ертсе пыма шанчĕ. Манăн 65 клуб тата 50 библиотека ĕçне тĕпрен вăйлатмаллаччĕ. Лару-тăрупа паллашнă май ишĕле пуçланă клубсем куртăм, вăтам пĕлÿллĕ пĕр специалист та, пĕр музыкант та çуккине пĕлсен эпĕ çухалсах кайрăм. Каялла чакма май çукчĕ, ĕçе пуçăнма тÿр килчĕ. Шăпах çав вăхăтра çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ: пирĕн хамăрăн, вырăнти кадрсем йĕркелемелле. Нурлатра музыка шкулне уçас шухăшпа эпĕ икĕ çул çÿрерĕм. Хамăн ĕмĕтĕме пĕрремĕш наставника Габбас Киямович Гиматдинова пĕлтертĕм. Тав ăна, вăл манăн шухăша ырларĕ, часах вара пурнăçа та кĕчĕ. Çапах та малтан общественность ырлани кирлĕччĕ. Çак тĕлĕшпе эпĕ мĕнпур шкулта, Пионерсен çуртĕнче пултăм, çапла майпа пултаруллă, музыкăна ăнланакан ачасене палăртрăм. Кайран çак ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе тĕл пулса, вĕсен ятĕнчен культура министрĕ ячĕпе музыка шкулĕ уçма ыйтса прошени ятăм. Списокĕ вăрăм пулчĕ.

Çапла, пĕррехинче эпĕ Хусана Культура министерствине парти райкомĕпе райĕçтăвком хута кĕрсе çырнă çырупа тата ашшĕ- амăшĕсен прошенийĕпе кайрăм. Аслă инстанцисенче пире хирĕçлемерĕç - музыка шкулĕ уçма ирĕк пачĕç!

...Районти вĕрентÿ пайĕ пире хулари 1-мĕш номерлĕ шкулта пĕр пÿлĕм уйăрса пачĕ. Пысăк йывăрлăхпа пулин те, фортепиано тата икĕ баян туянтăмăр. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Р.М.Иванова директор тата чугун çул ĕçченĕсен клубĕн баянисчĕ Н.И.Рамзаев фортепиано тата баян класĕпе вĕрентме йышăнасси пирки пĕлтерчĕç. Çапла музыка шкулĕ уçăлчĕ. Паллах çак çĕнĕ пулăмпа çыхăнакансенчен кашни çакăншăн питĕ савăнчĕç.

Çулсем иртрĕç. Музыка шкулĕнче учительсем те, ачасем те нумайланчĕç, вăл ÿсрĕ, çирĕпленчĕ, çĕнĕ прописка туянчĕ, инструментсем çĕнелчĕç, вĕрентÿ специализацийĕ анлăланчĕ. Çакă вара ăна уçнăранпа 33 çул хушшинче! Халь ачасен музыка шкулĕнчи преподавательсен тĕп пайĕ хамăрăн кадрсем. Ку шкултан вĕренсе тухнисем район культурине аталантарас тĕлĕшпе тĕрлĕ сферăсенче ĕçлеççĕ, чылайăшĕ вара музыкăна малалла вĕренеççĕ. Вĕсенчен кашни çинчен мăнкăмăлланса чылай калама пулать.

Нурлатри музыка шкулĕн хальхи вăхăтри çĕнĕ çуртне уçни вара культура ĕçченĕсемшĕн чăнах та пысăк савăнăç пулчĕ. Кунта ачасем музыка пĕлĕвĕ туяннисĕр пуçне тата хореографи, живопись урокĕсене те çÿреме пултараççĕ. Шкула кĕрекен кашни унăн илемлĕхĕнчен тĕлĕнет - чăннипех искусствăсен храмĕ. Çавăнпа та эпĕ хамăн чунри туйăма сăмахпа кăна нимĕнле те пĕлтерейместĕп. Унта эпĕ сентябрĕн 1-мĕшĕнче, ачасен музыка шкулне уçнă кун, пултăм: манăн пурнăçри ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ! Искусствăсен шкулне уçнă чухне унта пулнисем пурте, ман пекех, Нурлат историйĕнчи çак паллă пулăмпа çыхăннă çынсене тав тăваççĕ пулĕ тесе шутлатăп, чи малтан район администрацине, уйрăмах унăн пуçлăхне Фатих Саубанович Сибагатуллина, çаплах 547-мĕш ПМК строителĕсене яланах хисеплесе аса илĕç.

...Çак кун телейлĕ ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене курса эпĕ культурăра ĕçленĕ чухнехи канăçсăр, хавхаланупа тата хастарлăхпа тулнă çулсене, Габбас Киямовичăн çăмăл аллинчен пуçланнă кунсене аса илтĕм.

Тĕрĕс калаççĕ çав, этем каять, унăн юрри вара - унăн ĕçĕ - юлать...

**К.ИЗОТОВА,**
**культура ветеранĕ.**



**Н.АЗИЗОВ сăнÿкерчĕкĕнче: искусство шкулĕнчи концерт залĕ.**

* Чăваш Ен хыпарĕ

## Яковлев шкулне халаллана

Чăваш филологийĕпе культура тата И.Я.Яковлев институчĕсем пуçарнипе Чăваш патшалăх университетĕнче И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнăранпа 130 çул çитнине халалланă наука конференцийĕ иртнĕ. Унта хутшăннисем çак шкулăн чăваш интеллигенцине хатĕрлессипе çыхăннă пĕлтерĕшĕ, Яковлевăн вĕренÿ процесне ĕçпе тачă çыхăнтарса йĕркелемелли йăлисем çинчен, ытти темăсемпе докладсем итленĕ.

Çак конференци Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн 130 çулхи юбилейне уявламалли мероприятисен планĕпе килĕшÿллĕн иртнĕ. Çав плана парламентăн 3-мĕш сессийĕнче çирĕплетнĕ. Унта вĕрентÿпе культурăн мĕн пур учрежденийĕнче çавнашкал мероприятисем иртерме пăхса хăварнă. Çавăн пекех Ульяновскра наука-практика конференцийĕ иртерме палăртнă. Унта ЧПУ учениĕсем, Ульяновск облаçĕнчи чăваш диаспорин представителĕсем хутшăнĕç.

**В.КУЗНЕЦОВ.**
**("ХЫПАР" хаçатран).**

